Районти выльăх-чĕрлĕх отраслĕнче

# Ĕçре ыттисемшĕн ырă тĕслĕх

***Юпа уйăхне кĕтĕмĕр. Иркаç çанталăк палăрмаллах сивĕтни тата кăнтăрла та ытларах çурçĕр çилĕ вĕрни, йывăçсем çулçă тăкма пуçлани хура кĕркунне çывхарни пирки систереççĕ. Ун хыççăн вара – хĕл кунĕсем. Мĕнле хатĕрленеççĕ çак тапхăра "Ударник" сăнавлă производство хуçалăх ĕçченĕсем? Çак ыйту çине хуçалăхăн выльăх-чĕрлĕх отраслĕн пуçлăхĕ Л. ПЛАТОНОВА çапла хурав пачĕ:***



– Хĕл сивви – ял хуçалăх ĕçченĕшĕн хăйне евĕр çирĕп экзамен. Выльăх-чĕрлĕх продукцине илессине хĕлле те çу кунĕсенчинчен чакарса ярас мар тесен хĕл кунĕсене яваплăха туйса хатĕрленмелле. Çакна пĕлетпĕр, ăнланатпăр. Халĕ каланине выльăх апачĕ янтăлани те, сарай-витесене юсаса хăт кĕртни те кĕреççĕ. Кăçал эпир хĕл каçарма кĕртекен выльăхсем валли утă та, сенаж та чылай янтăларăмăр. Фуражлăх тырă та çитсе пырасса шанатпăр. Сарайсене çу кунĕсенче юсани тата ĕçлекенсене ĕç условийĕсемпе тивĕçтерни хĕлле те продукци илессине тивĕçлĕ шайра тытма пулăшĕ тесе шутлатăп, – терĕ кĕске калаçура Людмила Петровна.

Çулталăкăн тăхăр уйăхне хуçалăх ăнăçлă ирттернĕ тесен те пысăк йăнăш пулмасть. Паянхи куна "Ударниксем" пĕтĕмпе 18901 центнер сĕт сунă, çулталăк пуçланнăранпа майракаллă шултра выльăх ашне 1450 центнер, сысна какайне 1056 центнер реализациленĕ. Çак тапхăрта пĕр ĕне пуçне тивекен вăтам сăвăм 3436 килогрампа, майракаллă выльăхсен талăкри вăтам ӳт хушаслăхĕ 640 грампа, сыснасен 438 граммпа танлашаççĕ. Ку кăтартусем çулталăк каяллахинчен пĕртте чакман. Сыснасене кăçалхи февральтенпе типĕлле тăрантарма пуçланă хыççăн ӳт хушаслăх уйрăмах палăрăмлă хутшăннă. Çак хушăра хуçалăхри выльăхсен хисепĕ питех улшăнман. Паянхи куна Йӳçкассисемпе Вăрманкассем тата Панклисемпе Матьăксем 1396 пуç майракаллă шултра выльăха (вăл шутран 550 пуçĕ сумалли ĕнесем), 1247 сыснана, кашни фермăрах пур 32 лашана хĕл каçма кĕртме хатĕрлеççĕ. Çак тĕллевпе халĕ ĕневыльăх тытмалли 5 фермăпа тепĕр сысна ферминче пур çĕрте те юсавçăсен бригадисем ĕçлеççĕ. Фермăсене йăлтах дезинфекциленĕ, паян-ыран шуратма пуçламалла. Кĕскен каласан, хуçалăхăн выльăх-чĕрлĕх отраслĕ хĕл кунĕсене ответлăха туйса, выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхне тивĕçлĕ шайра тытас тĕллевпе хатĕрленет.

Эсир **пĕрремĕш сăн ӳкерчĕкре** куракан Тамара Аврамовна Московапа Зоя Степановна Андреева хуçалăхри выльăх-чĕрлĕх отраслĕнче çĕнĕ çынсем мар. Хăйсен ĕçне алă çинчи пӳрнесене пĕлнĕ пек курса тăнăран вĕсем ферма пыракан тата хуçалăхра вăй хуракан çамрăксемшĕн ырă тĕслĕх пулса тăраççĕ. Йӳçкассинчи сысна ферминче выльăхсене самăртнă çĕрте 8 çул ĕçленĕ Тамара Аврамовна çулталăк ĕнтĕ Йӳçкассинчи ĕне ферминe ертсе пырать. Панклири сĕт ферминче 20 çул пĕр улшăнмасăр дояркăра ĕçлекен Зоя Степановна Андреева 9 уйăхра хăйĕн ушкăнĕнчи кашни ĕнерен 4138 килограмм сĕт сума пултарнă. Ку вăл Вăрманкассинчи сĕт ферминче вăй хуракан Геннадий Яковлевпа Панклири сĕт ферминчи Галина Васильева операторсен кăтартăвĕ (4339 килограмм) хыççăн иккĕмĕш картлашка. Сăмах май, иртнĕ çул Зоя Степановна хуçалăхра сĕт сăвассипе пĕрремĕш вырăнта пулнă пулсан, районĕпе унăн кăтартăвĕ иккĕмĕшчĕ.

Йӳçкассинчи сĕт ферминче вăй хуракан Александровсем пирки вара уйрăм сăмах. Кунта тарăн тымар янă Александровсен династийĕ ырăпа çеç палăрса тăрать. Çемье пуçĕ Иван Николаевич 20 çула яхăн асăннă фермăра выльăх пăхакан пулса ĕçлет. Унăн мăшăрĕ Римма Семеновна вара малтанхи



çулсенче ĕне пăрулаттарнă çĕрте ĕçленĕскер, халĕ кăçал хуçалăх дирекцийĕ Президент стипендине илме тăратнă Николай ывăлĕпе **(иккĕмĕш сăн ӳкерчĕкре)** ĕне сăвассипе тимлет. Вĕсем çулталăк пуçланнăранпа хăйсен ушкăнĕнчи кашни ĕнерен 3 пин килограмм ытла сĕт сунă.

"Ударниксем" аталану çулĕпе малтан мала пăхнине Йӳçкассинче сĕт сумалли комплекс тума тапратни те калать. Çакна валли кунта сенаж ямисене пысăклатнă, унччен пăрусем тăнă сарая ĕнесем сумалли вырăн валли реконструкцилеме пуçланă.

Хуçалăхри выльăх-чĕрлĕх отраслĕн цехĕн пуçлăхĕ Людмила Петровна Платонова каланă тăрăх, хуçалăх çу-каçа выльăх апачĕ те çителĕклĕ хатĕрлеме тăрăшнă. Çакă хĕл кунĕсенче те продукци илессине çӳллĕ шайра хăварма пулăшасси пирки иккĕленӳ çук.

**Анатолий БЕЛОВ.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**


МУП "СБК"

## Муниципальное унитарное предприятие «Страховая больничная касса» г. Новочебоксарск

Муниципальное унитарное предприятие "Страховая больничная касса" г.Новочебоксарск специализируется на обязательном и добровольном медицинском страховании, является участником выполнения Территориальной про-



граммы обязательного медицинского страхования на территории Чувашской Республики. На рынке страховых услуг предприятие работает с 1 октября 1992 года и является одним из наиболее опытных страховщиков Чувашской Республики по медицинскому страхованию.

В 2007 году исполняется 15 лет с начала деятельности Страховой больничной кассы на территории Чувашской Республики. Предприятие за эти годы приобрело репутацию надежного делового партнера среди своих клиентов, обладает значительными страховыми резервами, достаточными для исполнения своих обязательств. С 1992 года по 2007 год уставный капитал вырос с 2 млн.руб. до 31 млн. руб.

За 15 лет работы мы смогли создать современную инфраструктуру компании, крепкую материально-техническую базу, систему экспертного контроля качества оказания медицинской помощи, полную базу данных по застрахованным на территории Чувашской Республики.

В сфере деятельности МУП "Страховая больничная касса" г. Новочебоксарск – работающее население районов и городов Чувашской Республики. Страховой портфель составляют более 19000 договоров по обязательному медицинскому страхованию и 1500 – по добровольному медицинскому страхованию. Количество граждан, застрахованных нашим предприятием по обязательному медицинскому страхованию, составляет восьмую часть населения республики. Это - более 175 тысяч работающих граждан. В районах и городах республики МУП "Страховая больничная касса" в настоящее время имеет 18 представительств и 1 филиал. Клиентами предприятия являются свыше 200 крупнейших промышленных предприятий республики, а также более 9000 клиентов – физических лиц.

Отличительная черта работы МУП "Страховая больничная касса" г. Новочебоксарск - не только обязательная возможность получения медицинской помощи в любом населенном пункте Чувашской Республики, но и обеспечение высокого качества медицинских услуг, и правовая поддержка наших клиентов.

Объем страховых поступлений по обязательному медицинскому страхованию, полученных МУП "Страховая больничная касса" г. Новочебоксарск за 15 лет, составил 990,00 млн.руб.; по ДМС – 48,0 млн. руб. Объем страховых выплат в лечебно-профилактические учреждения Чувашской Республики и за ее пределами от МУП "Страховая больничная касса" составил 992,00 млн.руб.

Моргаушское представительство создано в марте 2005 года. Моргаушским представительством по Моргаушскому району заключено 293 договора по обязательному медицинскому страхованию, по которым застраховано 8099 человек. За период с января 2005 года по сентябрь 2007 года оплачено 119526 случаев оказания медицинской помощи работающему населению Моргаушского района, т.е. в среднем каждый застрахованный гражданин обратился в лечебно-профилактические учреждения Чувашской Республики не менее 6-ти раз. Из общего количества случаев обращений 69,2% случаев оказания медицинской помощи приходится на Моргаушскую ЦРБ; 24,9% - на Моргаушскую РБ № 2; 5,9% - на Республиканские ЛПУ, ЛПУ г.Чебоксары, другие ЦРБ. Фактическая сумма на оплату медицинских услуг по застрахованным работающим гражданам Моргаушского района за период с 2005 по 2007 год составила 20,0 млн.руб. В этот же период дополнительно направлено в Моргаушскую ЦРБ 509,3 тыс.руб. на приобретение современной медицинской техники и профилактические мероприятия; в Моргаушскую РБ № 2 – 179,2 тыс.руб. на приобретение современной медицинской техники.

Успехи достигнуты ежедневным, кропотливым трудом дружного коллектива. Мы стремимся обеспечить здоровье и спокойствие людей, гарантируя ответственность компании по ее обязательствам. Стараемся научить людей предусмотрительности и заботе о себе.

Всем нам желаем здоровья и оптимизма. Пусть невзгоды обойдут нас стороной, а служение людям принесет праздник в наши сердца.

**Контактные телефоны:**
**Моргаушское представительство МУП "Страховая больничная касса" г.Новочебоксарск – 2-25-43.**
**Отдел медицинской экспертизы и защиты прав застрахованных МУП "СБК" в г.Новочебоксарск – 73-04-42.**
**Лицензия С № 213621 выдана Федеральной службой страхового надзора от 11.10.2005 г.**




Суйлавçăсене пĕлме

## 2007 çулхи декабрĕн 2-мĕшĕнче – хушма суйлавсем

Пĕлетпĕр ĕнтĕ, кăçалхи декабрĕн 2-мĕшĕнче РФ Патшалăх Думин депутачĕсен суйлавĕ иртет. Кунпа пĕрлех пĕр мандатлă уйрăм суйлав округĕсемпе депутатсен районти Пухăвĕн тата депутатсен ял тăрăхĕсен Пухăвĕсен депутачĕсене çĕнĕрен суйлассипе хушма суйлавсем иртterme палăртнă. Хаçатăн паянхи номерĕнче ку суйлав округĕсен схемине пичетлетпĕр:

### Депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕсене суйлассипе

| Суйлав округĕн ячĕ тата номерĕ | Округ чиккисем |
|---|---|
| 1-мĕш № Октябрьски | Муркаш ялĕ:<br>– Октябре 50 çул урам<br>– Парковая урам<br>– Гагарин урамĕ<br>– Восточная урам |
| 7-мĕш № Мăн Тутаркас | Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕ:<br>– Мăн Тутаркас ялĕ<br>– Малтикас ялĕ<br>– Кармăш ялĕ<br>– Çĕн Шоккăн ялĕ<br>– Туçи Олкаш ялĕ<br>– Кăмăркасси ялĕ<br>– Лап Олкаш ялĕ<br>– Каршлăх вырăнĕ<br>– Мăн Сĕнтĕр ялĕнчи Ленин урамĕ<br>Ильинка ял тăрăхĕ:<br>– Апчар ялĕ<br>– Кив Шоккăн ялĕ;<br>– Хопкĕпер ялĕ |

Депутатсен ял тăрăхĕсен Пухăвĕсен депутачĕсене суйлассипе

| Ял тăрăхĕсем | Суйлав округĕн ячĕ тата номерĕ | Округ чиккисем |
|---|---|---|
| Муркаш | 5-мĕш № Çурçĕр | – Муркаш ялĕнчи Октябре 50 çул урам (44а, 42, 38, 36, 32, 30, 28, 26 №№ çуртсем) |
| Турай | 10-мĕш № Тушкасси | – Тушкасси ялĕнчи Мартынов урамĕ<br>– Тушкасси ялĕнчи Володарски урамĕ |
| Юнкă | 10-мĕш № Канаш | – Канаш выççăлкки ялĕ<br>– Çармăçкассинчи Полевая урам<br>– Çармăçкассинчи Эхмен урамĕ<br>– Кăпас ялĕнчи Верхняя урам (7-мĕшĕнчен тытăнса 27-мĕшне çитичченхи çуртсем) |
| Ярапайкасси | 4-мĕш № Иштерек | Иштерек ялĕ |
| | 8-мĕш № Кӳстерек | Кӳстерек ялĕ |

Юн кунсенчи рубрика

## САККУН ВĂЛ ПУРИНШĔН ТЕ ПĔРРЕ

***Паянхи кăларăма район прокурорĕн пулăшакане Евгений Николаевич Егоров ертсе пырать***

## Пестицидсемпе вăхăтра усă курас пулать

**Хуçалăхсенчи минераллă удобрени склачĕсенчи йĕркелĕхшĕн кам яваплă? Район прокуратури çак ыйту çине пăхать-и? Тимлĕх уйăрать пулсан саккунпа ответ тытнисем пур-и? Ахальлĕн чылай çĕрте удобрени çумăр айĕнчех выртнине те курма пулать. Гербицичĕсем-пестицичĕсем тата ăçта упранаççĕ? Упрама пĕлмесен сывлăха сиен кӳмеççĕ-и вĕсем?**

**Е. СМИРНОВ, К. УВАРОВ, А. СИДОРОВА.**

Пĕр тĕслĕх çинче уйрăммăн чарăнса тăриччен çапла калатăп: ку ыйту та тимлĕхсĕр юлмасть, яваплисене ответ тыттаратпăр, йĕркесĕрлĕхсене тăрă шыв çине кăларатпăр. Малалла хам каланине çирĕплетекен тĕслĕх.

РФ Генеральнăй прокуратурин Управленийĕн федерацин Атăл çи округĕпе пăхнă заданине пурнăçласа Россельхознадзорăн Чăваш Республикинчи Управленийĕн специалисчĕсемпе районта усă курма чарнă, вăхăт тухнипе юрăхсăрланнă агрохимикатсемпе пестицидсем тĕлĕшпе саккун ыйтнине епле пăхăннине тĕрĕслерĕмĕр.

Тĕрĕслевре çакă палăрчĕ, район территорийĕнче тытма юраман тата юрăхсăра тухнипе "Çĕрпӳри ял хуçалăх химийĕ" предприятире утилизацилеме вăхăт çитнĕ 5260,7 килограмм пестицидсемпе агрохимикатсем пур. Район администрацийĕнчен пĕлтернĕ тăрăх юрăхсăра тухнă пестицидсемпе агрохимикатсем Михайловăн хресчен (фермер) хуçалăхĕпе "Оринино" ял хуçалăх производство кооперативĕн минераллă удобрени склачĕсенче пур, вĕсене Çĕрпӳри предприятие ăсатма михĕсене тултарса хунă. Тĕрĕслевре ку чăнлăх вырăнлă пулни палăрчĕ пулсан, Юнкă ял тăрăхĕнчи хуçасăр складра 50-шар килограмлă 22 михĕ паллă мар агрохимикатсемпе тата пестицидсемпе бетон урайĕнче выртни куç умне сиксе тухрĕ. Склад чăнах та хуçасăр иккенне тĕрĕслев пынă вăхăта вăл алăксăр тата çи виттисĕр пулни те çирĕплетрĕ. Ку çитменлĕхе виçĕ уйăхра пĕтерме ыйтса район администрацийĕ тĕлĕшпе тавăç çырăвĕпе суда тухрăмăр.

Район территорийĕнче хăйсен ĕçĕнче агрохимикатсемпе тата пестицидсемпе усă куракан 12 ял хуçалăх предприятийĕ ĕçлет. Кашни предприятирех наркăмăшлă имçамсем упрама складсем пур. Çав предприятисене тĕрĕсленĕ чух вĕсем агрохимикатсемпе пестицидсене туянсан вĕсене кĕске хушăрах тĕллевлĕ усă курни палăрчĕ. Юрăхсăра тухнă препаратсем "Оринино" хуçалăхпа Михайловăн хресчен (фермер) хуçалăхĕнчи икĕ складра кăна.

Асăннă препаратсене упранă тĕслĕхе "Ударник" сăнавлă производство хуçалăхĕн санитарипе эпидемиологи заключенийĕ илмен складĕнче тĕл пултăмăр. Накладнойсемпе килĕшӳллĕн хуçалăх çакнашкал пестицидсене çакăн чухлĕ илнĕ: "Максим" – 240 литр, "Моспилан" – 8 килограмм, "Премис" – 260 литр, "Сектин феномен" – 220 килограмм, "Ковбой" – 296 килограмм, "Карате" – 100 литр. Июлĕн 25-мĕшĕ тĕлне вĕсене упрама санитарипе эпидемиологи заключенийĕ илмен складра "Максим" юлашки 45 литр, "Моспилан" 0,2 килограмм, "Пенкоцеб" 375 килограмм, "Сектилфеномен" 24 килограмм, "Фурора – супер" 12 литр, "Кросс" 15 литр, "Помосупер" 105 литр юлнăччĕ. Ку çитменлĕхе кая юлмасăр пĕтерме хушса хăвартăмăр.

Хуçалăхсем пестицидсемпе тата агрохимикатсемпе епле усă курнине, вĕсене упранине пăхса тăрасси малашне те кун йĕркинче иккĕмĕш вырăна юлмĕ.